Çăлтăр хулин хастар чăвашĕ

1980-мĕш çул. Тӳрех калам, кĕтмен-туман çĕртен лекрĕмĕр Çăлтăр хулана. Шупашкарти тусăмсемпе Мускава Раççей писателĕсен пиллĕкмĕш съездне делегат пулса кайнăччĕ. Çакăнта, Кремль çывăхĕнче вырнаçнă «Россия» хăна çуртĕнче (шел, халĕ вăл çук ĕнтĕ), мана пĕр тĕреклĕ те маттур чăваш шыраса тупрĕ. «Тявин Илья Петрович пулатăп», – терĕ вăл хăйпе паллаштарса. Эпĕ те хамăн ятпа хушамата каларăм. «Тахçанах пĕлетĕп Ульккапа Надюш шăллĕне», – терĕ хăна. «Ак тамаша, – шухăшларăм эпĕ, – ку çынна хальччен нихăçан та курман-çке, епле пĕлме пултарать-ха вăл мана?»

Сăмах çине сăмах ваклапăмăр. Калаçуран çакă паллă пулчĕ: Илья Петрович, Самар облаçĕнчи Шунтал районĕнчи Сальел ялĕнче, Тутарстанри эп çуралнă Çĕнĕ Йĕлмелĕрен вун çичĕ çухрăмра 1928 çулта çуралнăскер, вăрçă вăхăтĕнче хăй вун улттăра чухнех пирĕн яла ачасене вĕрентме пынă.

Акă еплерех аса илчĕ вăл çав йывăр тапхăра Мускаври хăна çурчĕн пӳлĕмĕнче. Эпир, чăвашсен паллă поэчĕпе Георгий Орловпа пĕрле вырнаçнăччĕ те, Илья Петрович сăмахне питĕ тимлĕн итлесе лартăмăр вара.

– Эп çуралнă çĕршыв, – тесе пуçларĕ хăйĕн калаçăвне Çăлтăр хулинчен килнĕ подполковник, – кăштах вырăссемпе хутăшлă пысăках мар чăваш ялĕ Сальел, Çарăмсана юхса кĕрекен Иштукан çырмин икĕ енчи çыранĕсен хĕрринче вырнаçнă. Инçех те мар Турхан вăрманĕ таврана илем кӳрсе ларать. Ялĕ вара пирĕн, таврa пĕлӳçĕсем тĕпчевĕ тăрăх, 1750-мĕш çулсенче пуçланса кайнă, чи малтан Сали, Тимах тата Тява ятлă арçынсен çемйисем тĕпленнĕ теççĕ, вĕсем Чĕмпĕр уесĕнчи Ирçел тата Анат Тимĕрçен, Кивĕ тата Çĕнĕ Йĕлмел ялĕсенчен куçса пынă иккен. Апла пулсан, темиçе ĕмĕр каярах, Порфирий шăллăм, эсир çуралнă Йĕлмел чăвашĕсемпе эпир çывăх тăвансемех пулма пултарнă.

Илья Петрович хăйĕн ачалăхне те питĕ лайăх астăвать.

– Мĕн калассе, çăмăл пулмарĕ çав тапхăр. Эпĕ пилĕк класс пĕтернĕ çулхине хăрушă вăрçă сиксе тухрĕ. Атте вăрçа тухса кайрĕ, килте асатте те анне тата манпа виçĕ йăмăк тăрса юлтăмăр. Кашни вĕренӳ сулĕ хыççăн çăвĕ-çăвĕпе хирте те вăрманта тăрмашаттăмăр, фронта пулăшас тесе пĕтĕм вăя хурса ĕçлеттĕмĕр. Çапах та вĕренсе çын пулас шухăша та пăрахмарăмăр эпир, ун чухнехи çамрăксем. Хамăн малтанхи вĕрентекенсене – Альмендеев Тухтаман Тудияровича тата Угадеров Николай Ивановича халĕ те ырăпа, ыланах тав туса аса илетĕп эпĕ. Шел, иртнĕ вăрçăран таврăнаймарĕç вĕсем, нимĕç фашисчĕсемпе паттăррăн çапăçса пуçĕсене хучĕç.

1943 çулта ялти çичĕ класлă шкултан вĕренсе тухсан темиçе юлташпа пĕрле Аксури педучилищĕне кайса кĕтĕмĕр. Пиртен утмăл çухрăмраччĕ Аксу. Астăватăп-ха, лере апат хатĕрлемелĕх тесе, çунашка çине çĕр улми тиесе, çуранах танккаттăмăр çав вăрăм çулпа. Выçăллă-тутăллăскерсем часах ывăнаттăмăр, канма ларас – сивви «ăшалать». Çуркуннеччен чăткаларăмăр çапла. Кайран вара çулсем пăсăлса кайрĕç те, эпир, Ники-

Андриян Николаевпа Илья Тявин

та юлташӑмпа, ҫакӑн пек шухӑшларӑмӑр: хамӑр ялтан пилӗк ҫухрӑмра вырнаҫнӑ Ҫӑрӑмсан вӑтам шкулӗн (Тутар АССРӗ) саккӑрмӗш класне (унта кашни предмета вырӑсла ҫеҫ вӗрентеҫҫӗ) куҫса килес. Вырӑсла чаплах пӗлеймесен те хӑнӑхӑпӑр терӗмӗр. Ҫапла турӑмӑр та. Телее, сакӑр класс пӗтерсенех ҫут ӗҫ пайӗ ҫумӗнче учительсем хатӗрлекен уйӑх ҫурӑллӑ курс (ун чух шкулсенче учительсем ҫитместчӗҫ) уҫӑлчӗ. Эпӗ ҫав курсран вӗренсе тухрӑм та мана Ҫӑрӑмсан районӗнчи Ҫӗнӗ Йӗлмел ялӗнчи тулли мар вӑтам шкула ачасене вӗрентме ячӗҫ. Шӑпах вун улттӑраччӗ эпӗ ун чухне.

Шкулта вун виҫӗ учительтен вуннӑшӗ ҫамрӑк хӗрсемччӗ. Халӗ те куҫ умӗнчех-ха вӗсем – пурнӑҫ ҫулне пӗрле пуҫланӑ хӗр-тантӑшсем е кӑшт аслӑраххисем: гитара каласа хӳхӗм юрӑсем юрлакан Нина Алексеевна Васюткина, тӑван чӗлхене шутсӑр юратакан Мария Харитоновна Емендеева, Антонина Николаевна Редюкова, вӑрҫӑран ҫӗнтерӳпе киле таврӑннӑ Зинаида Ильдимировна Кузнецова-Мельникова... Каярах пирӗн йыша Аксу педучилищинчен вӗренсе тухнӑ Ольга Ивановна Родионовӑпа Елена Алексеевна Васюткина хутшӑнчӗҫ. Ҫавӑн чухнех Ҫӗнӗ Йӗлмеле ман ачалӑхри тусӑм Никита Дмитриевич Альмендеев килчӗ. Шкул пӳлӗмӗсене шӑпах Порфирийӗн ӗҫчен аппӑшӗсем Ульккапа Надюш тата Ультепи Ильдирякова тирпей кӗртсе тӑратчӗҫ. Вӗсем те хамӑр ӳсӗмрисемехчӗ. Вӑт ҫавӑн чух паллашнӑ та эпӗ пиллӗк-улттӑри чӗрӗ те лара-тӑра пӗлмен вичкӗн хура куҫлӑ Порфирий ятлӑ ачапа.

Йывӑрччӗ пурнӑҫ. Анчах ҫавна пӑхмасӑрах шкул ачисене те, ял ҫыннисене те эпир яланах ҫывӑх вӑхӑтра ҫӗнтерӳ пулассипе хавхалантарса тӑма тӑрӑшаттӑмӑр, уявсем вӑхӑтӗнче концертсем, спектакльсем лартса параттӑмӑр.

Ӗҫленӗ вӑхӑтрах Аксури педучилищӗрен заочно вӗренсе тухрӑмӑр. Ҫавӑн хыҫҫӑн мана Ҫӑрӑмсана район сучӗн секретарӗнче ӗҫлеме куҫарчӗҫ, тепӗр ҫултан вара Совет Ҫарне илчӗҫ. Ҫавӑнтанпа хамӑн кун-ҫулӑма ҫар ӗҫӗпе ҫыхӑнтартӑм. 1952 ҫулта авиаци

сар училищинчен, каярахпа институтран вĕренсе тухрăм, служба картлашки тăрăх инженер-подполковнике çитрĕм.

– Чимĕр-ха, чимĕр, – Илья Петровича пӳлсех ыйтрăм эпĕ. – Эсир çавăн чух, Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче ĕçленĕ вăхăтра, матрос карттусĕпе çӳремен-и?

– Шăпах çапла, – терĕ Илья Петрович. – Анчах вĕçĕнленес тесе мар, çитмен пурнăçа пула, вăл карттуса мана салтакран таврăннă пĕр пичче панăччĕ. Пурнăç ытла йывăрччĕ ун чух, учитель пулин те, çăпата сырса çӳреттĕмĕр.

Чылайччен лартăмăр калаçса. Пурне те питĕ лайăх астăвать иккен Илья Петрович, унтанпа вăтăр çул иртнĕ пулин те, кашни çынна ятран аса илет. Çĕнĕ Йĕлмелĕри хăйĕн ӳсĕмĕнчи Лука Скворцова, Кузьма Сидуллина (каярах вĕсем те Совет çарĕн офицерĕсем пулса тăчĕç), Николай Иванова та (ялти пĕрремĕш çын институт пĕтерсе врач-рентгенолог ĕçне алла илнĕскер), хастар та уçă саслă Пикепи, Майпике, Тăхтапи, Хитрепи, Чĕкеçпи, Пинеслу хĕр-тантăшĕсене те ырăпа асăнчĕ вăл. Ăçта кăна пулсан та чăвашла тухса тăнă «Ялавпа» «Тăван Атăл» журналсене яланах çырăнса илнĕ иккен поэт чунлă, хăй те çамрăк чух нумай-нумай сăвă шăрçаланă маттур офицер. Çавăнпах ĕнтĕ вăл манăн литературăри пултарулăха та сăнаса-йĕрлесех тăнă, чăвашсен ытти çыравçин хайлавĕсемпе те пĕрмаях кăсăкланнă. Мускавра вара наци литературисен лавккинче вĕсен кĕнекисене час-часах туяннă.

1961 çул пуçламăшĕнче Илья Петрович Тявина Мускав çывăхĕнчи космонавтсем хатĕрлекен центрăн инженери пайне чĕнсе илеççĕ те аслă техник-инструктор ĕçне шанса параççĕ. Пай сотрудникĕсем çĕршыври тĕрлĕ çĕртен илсе килнĕ летчиксене кăткăс устройствăсем çинче (вĕсене стендсем тесе ят панă) ĕçлеме хăнăхтараççĕ. Хăйсен кулленхи ĕçĕ кĕç-вĕç пĕтĕм тĕнчене кисретсе ямалли событие çывхартни çинчен çав инженерсенчен пĕри те шутламан-ха малтанлăха. Вĕсен тĕллевĕ опытлă летчиксене космос вĕçевĕнчи условисене çывăх тăракан лару-тăрупа лайăххрах паллаштарасси пулнă. Çавăн валли кунта пĕр вырăнта чупмалли çул, онтокинетически барабан,

Чăваш писателĕсем Çăлтăр хулинчи «Мир» космос станцийĕн макечĕ умĕнче.

ротор, силленсе тăракан платформа ăсталанă, пулас космонавтсем валли пĕрремĕш тренажер вырăнне пĕрремĕш «Восток» карапĕ хатĕрлесе вырнаçтарнă. Çак вĕренӳ карапĕнче вĕсем карапăн вĕçевне алă вĕççĕн иртерме, алăпа тытса пыма, радиоçыхăну йĕркелеме, наукăн тĕрлĕ эксперименчĕсене тума, борт журналне мĕн-мĕн çырмаллине хăнăхнă.

– Эксплуатаци вăхăтĕнче, – каласа парать пире Илья Петрович, – тренажерсене лайăхлатсах пыма тăрăшаттăмăр эпир. «Çĕр куçнине» имитаци туни космонавтсене те, инструкторсене те килĕшсех каймастчĕ. Пирĕн ушкăна ертсе пыракан Е.Целикин инженер мана кинопленка çинчи сăнсене лайăхлатмалли майсем пирки шухăшласа пăхма сĕнӳ пачĕ. Чылай опыт тунă хыççăн, чăнах та, çак майсене шыраса тупрăм эпĕ. Ман ĕçе хаклама Юрий Гагарина (вăл хăйĕн пĕрремĕш вĕçевĕнчен таврăннăччĕ ĕнтĕ) чĕнчĕç. Вăл манăн установкăна тĕрĕслесе пăхрĕ те кăмăллăн кулкаласа çапла каларĕ:

– Чăн та, халĕ шăп та лăп космосри пекех.

Юрий Гагарин ячĕ этемлĕх историне яланлăхах кĕрсе юлчĕ. Тăван çĕршыв ăна сумлă та ответлă ĕç – «Восток» караппа космоса пĕрремĕш хут вĕçме шанса пачĕ. Çак ĕçе вăл чыслăн, чăн-чăн паттăрла пурнăçларĕ, тăван халăха, çĕршыва чун-чĕререн парăннине кăтартса пачĕ. Эпир, унăн ĕçри юлташĕсем, хамăршăн ырă кăмăллă, хăйĕнчен те, хăйне пăхăнса тăракан ытти çынсенчен те çирĕп ыйтакан командира питĕ хисеплеттĕмĕр. Пире, инженерсемпе техниксене, Юрий Алексеевич яланах тивĕçлĕ пулăшу пама хатĕрччĕ. Тренажерсене лайăхлатса аталантарас ĕçре те унăн тӳпи калама çук пысăк.

Ю.А.Гагарин хыççăн космоса Герман Титов, Андриян Николаев, Павел Попович вĕçсе кайса килчĕç. Уйрăмах эпĕ хамăр ентеш «Восток-3» космос карапĕн командирĕ Андриян Григорьевич Николаев вĕçев программине ăнăçлă пурнăçласан питĕ хытă савăнтăм. Лăпкă, хăюллă, çирĕп сывлăхлă, техникăна питĕ лайăх пĕлекенскер, Андриян Григорьевич тĕнче уçлăхне икĕ хут кайса килсе тăван çĕршывăмăр ятне тата çӳлерех çĕклеме пулăшрĕ.

– Сăмах май каласан, – тесе вĕçлерĕ çав кунхи калаçăва Илья Петрович, – космонавтсене «Восток», «Восход», «Союз» тата «Салют» йышши карапсемпе вĕçме хатĕрлес ĕçре ытти халăх ывăлĕсемпе пĕрле чăвашран тухнă çынсем тата пулнă пирĕн. Тĕслĕхрен, В.М.Портнов, А.Ф.Сироткин, С.М.Михайлов.

– Халĕ те унтах ĕçлетĕр-и вара? – кăсăкланчĕ Георгий Орлов сăвăç.

– Пĕлтĕр, 1979 çулта, Совет Çарĕн ретĕнчен запаса тухнă хыççăн, мана Çăлтăр хулинчи авиаципе космонавтика ĕçченĕсен пĕрлештернĕ профсоюз комитечĕн председательне суйларĕç, – хуравларĕ Илья Петрович. – Унсăр пуçне, Андриян Григорьевич РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулнă май, ăна суйлавçăсен ыйтăвĕсене татса панă чухне пулăшатăп, ун патне килсе çӳрекен хăнасене, уйрăмах чăвашсене, кĕтсе илме, ăсатса яма тăрăшатăп.

Хăна çуртĕнче чылайччен калаçса ларнă хыççăн Илья Петрович Тявин пире хăй патне, Çăлтăр хулана, хăнана пыма чĕнчĕ. Çыравçăсен съезчĕ тепĕр ирхине кăна пуçланать, ĕлкĕретпĕр тесе эпир кĕтмен сĕнӳпе хаваспах килĕшрĕмĕр.

Тĕп хулари Хусан вокзалне хирĕçех вырнаçнă Ярославль вокзалĕнчен тапранса пирĕн электропуйăс Циолковский платформине çитсе чарăнчĕ. Эпир космонавтсем ха-

тӗрлекен центрӑн пропусксем паракан бюровӗнче тивӗҫлӗ хутсем ҫыртартӑмӑр та малалла утса кайрӑмӑр.

Акӑ вӑл, тӗнчипе паллӑ Ҫӑлтӑр хули: кунта паттӑр космонавтсем кӑна мар, нумай-нумай тӗрлӗ специалист – ученӑйсемпе медиксем, методистсемпе тренерсем, вӗсен ҫемйисем пурӑнаҫҫӗ иккен. Кунта вӗренӳ корпусӗсемпе лабораторисем, астрономи обсерваторийӗ, пысӑк спорт комплексӗ вырнаҫнӑ. Кунтах – пилӗк, тӑхӑр, вун пӗр хутлӑ пурӑнмалли ҫуртсем, магазинсем, хӑна ҫурчӗ, вӑтам шкул, ача сачӗ, ясли, Культура ҫуртӗнче пысӑк кинозал, библиотека, космонавтика музейӗ...

Ҫӑлтӑр хулин тӗп лапамӗнче – Юрий Гагарина чысласа лартнӑ палӑк. Илья Петрович каланӑ тӑрӑх, ун умӗнче ҫулталӑкӑн кирек хӑш вӑхӑтӗнче те чӗрӗ чечексем ҫиҫеҫҫӗ. Чечексем пуш уйӑхӗн 9-мӗшӗнче, Гагарин ҫуралнӑ кун, тата ака уйӑхӗн 12-мӗшӗнче, вӑл космоса ҫӗкленнӗ кун, уйрӑмах нумай пулаҫҫӗ иккен. Нумай-нумай хӑна палӑк умне пырса, космос алӑкне уҫнӑ пӗрремӗш ҫынна асӑнса, пӗр минут шӑп тӑрать.

Илья Петрович пире тӳрех Ҫӑлтӑр хулин музейне илсе кӗчӗ. Ӑна уҫнӑранпа ҫӗршер те пиншер ҫын пырса курма ӗлкӗрнӗ иккен.

Кунта кӗрсен тӳрех Юрий Гагаринӑн ӗҫ сӗтелне асӑрхатӑн. Календаре юлашки хут пуш уйӑхӗн 27-мӗшӗнче уҫса хунӑ. Юнашарах ҫырусем, ӗҫ хучӗсем выртаҫҫӗ. Тумбочка ҫинче – уйӑх глобусӗ. Кантӑк айӗнче Ю.Гагаринпа В.Серегин летчикӑн докуменчӗсем. Алӑк ҫинче сехет ҫакӑнса тӑрать, ун йӗпписем 10 сехет те 31 минут кӑтартаҫҫӗ. Шӑпах ҫак вӑхӑтра 1968 ҫулхи пуш уйӑхӗн 27-мӗшӗнче Ю.Гагаринӑн чӗри тапма чарӑннӑ.

Гагаринӑн асӑну пӳлӗмӗнче – тӗрлӗ фотоӳкерчӗк, ӗҫ хучӗсем. Кунтах Гагарин полковник мундирӗ, ун ҫинче Тӑван ҫӗршывӑн тата ытти ҫӗршывӑн нумай-нумай наградi. Кунтах – пӗрремӗш космонавт ҫуралса ӳснӗ ҫуртӑн макечӗ. Ӑна армян ачи, йывӑр чирпе выртакан Мельсик Несерсян шӑрпӑк пӗрчисене ҫыпӑҫтарса тунӑ.

Пысӑк залра – космос техникине кӑтартакан пысӑк экспозици. Унта пулса курнӑ хыҫҫӑн пирӗн ҫӗршыври космос историйӗ куҫ умне яр уҫҫӑн тухса тӑрать.

...Чылай ҫӳрерӗмӗр эпир ҫав кун Ҫӑлтӑр хулинче. Юлашкинчен Илья Петровичӑн хӑтлӑ хваттерӗнче пире унӑн мӑшӑрӗ – ытарайми ӑшӑ кӑмӑллӑ Виталина Ивановна тараватлӑн кӗтсе илчӗ. Сӑмах хыҫҫӑн сӑмах тӑсса ҫак маттур хӗрарӑмӑн ашшӗ Иван Чӑваш халӑх поэчӗн Стихван Шавлин ашшӗпе Антонпа пӗр тӑванах пулнине пӗлсен шалт тӗлӗнсе кайрӑмӑр. «Ара, ҫаплах ӗнтӗ, ҫаплах, – тет пире кил хуҫи, – пирӗн тымарсем – унтан, Самар тӑрӑхӗнчен, Ҫарӑмсан ҫыранӗсенчен. Виталина, авӑ, Шунтал районӗнчи Чулҫырмара, эпӗ вара Сальелӗнче ҫуралнӑ».

Стихван Шавлипе унӑн мӑшӑрӗ Ольга Ивановна тата Ирина ятлӑ хӗрӗ 1975 ҫулта хӑйсем патне хӑнана килсе кайни ҫинчен те каласа кӑтартрӗҫ кил хуҫисем. Космонавтика кунне паллӑ тунӑ вӑхӑтра килсе ҫитнӗ иккен хаклӑ хӑнасем. Культура керменӗнчи пысӑк уява та илсе кайса кӑтартнӑ вӗсене. Мӗн пур космонавта та, Юрий Гагарин амӑшне Анна Тимофеевнӑна та курса юлнӑ вара чӑваш халӑх поэчӗ, Андриян Григорьевич Николаевпа тӑван чӗлхепе калаҫнӑ, ӑна чӑваш ҫыравҫисенчен хӗрӳллӗ салам каланӑ.

«Тепӗр ҫул, Мускав ҫывӑхне канма килсен, Ҫӑлтӑр хулине тепре килсе куратӑпах», – тесе сыв пуллашрӗ пирӗнпе Степан Антонович. Шел, унӑн сӑмахӗ пурнӑҫа кӗреймерӗ, 1976 ҫулхи нарӑс уйӑхӗнче ӑна Шупашкара пырса юлашки ҫула ӑсатмалла пулчӗ, – хурлӑхлӑн каларӗ Илья Петрович. – Мӗн тери чӗрӗ те хастар ҫынччӗ вӑл, кашни сӑма-

хĕнче пысăк ăс тапса тăратчĕ. Пурăнмаллаччĕ те пурăнмаллаччĕ, хăватлă сăвви-поэмисемпе халăха савăнтармаллаччĕ, çитмĕле те çитейменччĕ вĕт-ха...»

– Пире Çăлтăр хулинче пурăнакан тепĕр ентеш – Василий Портнов – кĕтетчĕ, каçа юлатпăр тесе кĕреймерĕмĕр ун патне. Андриян Григорьевич Николаев килте марччĕ çав кун. Анчах тепĕр кунне, Çăлтăр хулинче чăваш поэчĕсем пулнă тенине илтсен, вăл пире хăйĕн «Вĕçĕ-хĕррисĕр уçлăхра» кĕнекине алă пусса парнелеме ыйтнă. Çав хаклă парнене пире каярах Илья Петрович Хусан вокзалне илсе пырса пачĕ, хăй вара чăваш писателĕсене питĕ ăшшăн ăсатса ячĕ.

Миçе хутчен тĕл пулмарăмăр-ши Илья Петровичпа çав паллашу хыççăн! Тепĕр çулла, отпуск вăхăтĕнче, эпĕ ăна хамăр яла, Çĕн Йĕлмеле, пĕрле кайса килме сĕнӳ патăм. Вăл та тăван Сальелне çитсе килме шухăш тытнă та, унта тĕл пулма калаçса килĕшрĕмĕр.

Дмитровградра пурăнакан Людмилăпа (çут тĕнчерен ытла ир уйрăлса кайнă Улька аппан хĕрĕ) унăн упăшки Петĕр тата вĕсен пĕчĕк хĕрĕ Оля мана çăмăл машинăпа Илья Петрович çуралнă ялах илсе çитерчĕç. Ăшшăн кĕтсе илчĕ пире Тявинсен кил-йышĕ. Илья Петровичăн ашшĕпе амăшĕ самаях ватă ĕнтĕ, анчах ăслă-тăнлă та çаврăнăçуллă, тараватлă та ырă кăмăллă. Ашшĕ, Петр Семенович, пурăнан пурнăçра революци вут-хĕмне те, выçлăх нушине те, коллективизаци тапхăрне те, вăрçăн чăтма çук йывăр çул-йĕрĕсене те чăтăмлăн чăтса ирттернĕ кĕрнеклĕ çын, ниме парăнман пăхаттир пек курă-нать. Калаçăвĕ лăпкă та витерӳллĕ унăн, кăмăл-шухăшĕ уçă та шанчăклă – пĕр сăмахпа, çĕр çинче çирĕп тăракан чăн-чăн хресчен.

Илья Петрович мана хăйĕн ялне кăтартса çӳрерĕ, ачалăхне аса илчĕ, урамра тĕл пулнă çынсемпе паллаштарчĕ. Килĕнче, сăмавар умĕнче шăкăл-шăкăл калаçса ирт-тернĕ апат вăхăтĕнче, эпĕ çакна савăнса асăрхарăм: Илья Петровичăн çепĕç те ачаш чунĕ – лирик чунĕ – амăшĕнчен иккен унăн, кирлĕ самантра тӳрех хăйне хăй алла илсе çирĕп вăйлă пулас хăнăхăвĕ вара – ашшĕнчен. Тĕллев тытнă – пурнăçланă. Нимĕнле чăрмава пăхмасăр. Ал усмасăр. Нăйкăшмасăр. Çапла çав, чăн-чăн çын, чăн-чăн çутă тĕслĕх пулса тăчĕ маншăн ытарайми çак Илле пичче.

Çарăмсана çитрĕмĕр. Унта пире манăн тăвансем, пĕрле ӳснĕ тантăшсем, сывăх юлташсем Галинăпа Петр Тихоновсем (районти врач-хирург), Дмитрий Селиванов (районти вăрман хуçалăхĕн пуçлăхĕ), Виталий Митрюхин (районти ГАИ пуçлăхĕ), Николай Михлеев (районти ял хуçалăх управленийĕн тĕп инженерĕ), Михаил Журавлев (сывăх-ри «Новый путь» колхоз председателĕ) ăшшăн кĕтсе илчĕç. Район центрĕн çĕнелсе пыракан урамĕсем тăрăх курса çӳрерĕмĕр, юнашарти Шелеписем, Хусанкайсем, Шав-лисем мухтанă Çарăмсан хĕрринчи юмахри пек улăхра шыва кĕтĕмĕр. Ун хыççăн вара Çĕнĕ Йĕлмеле çул тытрăмăр. Илья Петрович ял урамĕсемпе иртнĕ чух хăй мĕн курни-не ĕненмесĕр пуçне пăркаласа пырать. Çурчĕсем çĕнĕ, шкулĕ те, Культура çурчĕ те, магазинĕсем те çĕнĕ. Ял хĕрринче Сĕнче шывне тĕплĕн пĕвелесе лартнă та – пысăк пĕвере халь виç-тăват кило таякан карп пуллисем выляççĕ.

– Эккей, – тет пирĕн хисеплĕ хăна, – вăтăр çул каялла кам шутланă кунта çакăн пек улшăнусем пулаççĕ тесе?! Маттур, йĕлмелсем, маттур!

Нумай-нумай çынпа – хăй астуса юлнă ватăсемпе, пĕрле ĕçленĕ учительсемпе, хăй вĕрентнĕ çамрăксемпе чунне уçса калаçрĕ вара Çăлтăр хулинчен килнĕ инженер-под-полковник. Манман, лайăх астăваççĕ ăна кунти тав кăмăлне чĕререх усракан Йĕлмел-

сем, кашниех ун аллине ҫирĕппĕн чăмăртать, пуҫне пĕксех пуҫ таять, малашнехи пурнăҫра ырлăх-сывлăх сунать.

Уйрăмах чыслă хăнасене кунта ялăн хĕвел тухăҫ енчи вăрманта вырнаҫнă шутсăр илемлĕ, ҫутă ҫăл куҫлă Ҫарăк ĕшнине илсе кайса хăна тăваҫҫĕ. Ку вăл йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Ҫак ĕшне пирки эпĕ сăвă та ҫырнăччĕ. Унта ҫакăн пек йĕркесем пур:

Ĕшне ҫаврака пулнăран
Ят панă пуль – Ҫарăк ĕшни.
Кунта тĕл пулатпăр ялан –
Тус-йыш, хурăнташ, чун савни.

Тĕнче ҫаврака пулнăран
Кунтах таврăнатпăр ҫуллен.
Каятпăр пулас-и вăйран
Кунти ҫăл шывне ĕҫмесен.

Ӳпке сывлаймасть пек кал-кал
Кăвайт тĕтĕмне ҫăтмасан,
Юнать пек пире тăван ял
Ак ҫак ĕшнене пымасан.

Ачалăх туртать-и кунта?
Аваллăх чĕнет-и пире? –
Илетпĕр сĕткен тымартан,
Выртса чуп тăватпăр ҫĕре.

Куҫҫуль пек таса ҫăл куҫа,
Таҫта кайнă евĕр, юта,
Эпир пăрахмастпăр укҫа,
Эпир таврăнатпăр кунтах.

Илья Петрович, ҫак ĕшнене ҫитсен, тӳрех шăпланчĕ, шухăша путрĕ. Ун хыҫҫăн вара ҫунакан кăвайт ҫине пăхса ларчĕ-ларчĕ те ҫапла каларĕ:

– Ҫак ҫăл патĕнче эпĕ пуҫласа 1945 ҫулхи майăн 9-мĕшĕнче пулнăччĕ. Нихăҫан та манас ҫук ҫав куна. Вăрçă вĕҫленнĕ! Аслă Ҫĕнтерӳ! Кам юрлать, кам макăрать. Ҫумăрлă куна пăхмасăр эпир, колхоз конюхĕпе иксĕмĕр, виҫĕ ҫухрăмри Лашмана, унта вырнаҫнă ялпона кайса, праҫник тумалли ĕҫме-ҫиме илсе килтĕмĕр. Митинг ирттертĕмĕр, Ҫĕнтерӳ кунне хаваслăн уявларăмăр, кайран тантăшсемпе пĕрле Ҫарăк ĕшнине хăпартăмăр. Мĕн пур хĕн-асап, хуйхă-суйхă, вĕри куҫҫуль пĕтессĕн туйăнатчĕ пире ҫак ҫĕнтерӳллĕ кун хыҫҫăн. Курăр-ха, тĕпрен илсен ҫавăн пеках пулчĕ мар-и вара? Пурнăҫ, паллах, йывăрлăхсăр пулмасть, анчах пăхăр-ха хăвăр ҫине – эсир паян пурте чыслă-сумлă ҫынсем – врачсем, инженерсем, агрономсем, учительсем, поэтсем... Аслă Ҫĕнтерӳ пулман пулсан кам пулаттăмăрччĕ-ши?..

Эпир, хамăрăн атте-аннесене, паттăр салтаксемпе тыл ĕҫченĕсене асăнса, вĕсене чун-чĕререн тав туса, пĕр самант шăп тăтăмăр.

Тепĕр темиҫе ҫултан Илья Петрович тепĕр хут кайса килнĕ пирĕн яла. Манăн аннем

ҫӗре кӗнӗччӗ ӗнтӗ. Лукари аппа Чаллӑ пуҫ районӗнчи Чулкаҫ ялне Надюш аппа патне куҫса кайнӑччӗ. Пирӗн пӳрт пушанса юлнӑччӗ.

Ҫавӑн чух И.П.Тявинпа яла кайса килме вӑхӑт тупаймарӑм эпӗ. Мана Чӑваш писателӗсен союзӗн председательне суйланӑччӗ те эпӗ унпа пӗрле ҫӳреме ерҫеймерӗм. Тепӗр икӗ эрнерен вара Ҫӑлтӑр хулинчен ҫыру илтӗм. Илья Петрович тӑван тӑрӑха мӗнле кайса килни ҫинчен ҫырать:

«... Шунтал, Сальел, Ҫарӑмсан урлӑ тухса Ҫӗнӗ Йӗлмелӗре те пултӑм. Сана аса илтӗмӗр, картишне кӗрсе тухрӑмӑр. Пурӑнман ҫурт салхуллӑ, чӳречисем уҫӑ... Мӗн калас, асӑнмалли ҫеҫ...»

Чун тӑвӑлса килчӗ, куҫӑм шывланчӗ. Ҫав каҫах эпӗ ун патне ҫакӑн пек сӑвӑлла ҫыру ҫырса ятӑм:

«Мӗн калас ҫав, мӗн калас, Илле тете,
Эпир иккӗн мӗн курман пуль ӗмӗрте?

Ҫак ҫурта эс астӑватӑн ачаран,
Эс унта кӗрсе тухаттӑнччӗ шкултан.

Нихӑҫан матрус карттусӗ курманскер,
Эп сана пит ӑмсанаттӑм, пӗчӗкскер.

Ырӑпа та ӑшӑпа килекене
Тараватчӗ яланах атте-анне.

Санӑн пурччӗ тантӑшу – Улькка аппам...
Ах, суран ҫине тӑвар эс ан сапсам.

Мӗнлерех маттур юрлатчӗ! Хамӑрла!
Ҫамрӑк ӗмӗр вӗҫсӗр-хӗрсӗр пуласла.

Ҫук, пулмарӗ. Ир куҫ хупрӗ кӗл чечек,
Ас илӳ ҫеҫ тӑрса юлчӗ тӗлӗк пек.

Иртрӗ пуль-ҫке ҫамрӑк ӗмӗр, иртрӗ пуль.
...Тӑлӑх ҫуртӑн чӳречи ҫинче – куҫҫуль.

Иртнӗ кунӑн ҫутине курас тесен
Пырса пӑхӑр тӑлӑх ҫурт чӳречинчен.

...Ҫӑлтӑр хулинче Андриян Григорьевичпа питӗ туслӑ пурӑннӑран Илья Петрович виҫҫӗмӗш космонавта май килнӗ таран пулӑшса пыма тӑрӑшнӑ. Генерал-майорӑн ӗҫӗ чӑнах та шутсӑр нумай пулнӑ. Вӑл Космонавтсем хатӗрлекен центр пуҫлӑхӗн пӗрремӗш ҫумӗ, ҫӗнӗ вӗҫев ирттерес тӗлӗшпе чи ответлӑ ҫын. Унсӑр пуҫне унӑн обществӑллӑ ӗҫсем питӗ нумай. РСФСР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ хӑйӗн суйлавҫисен наказӗсене пурнӑҫлас тесе мӗн чухлӗ тӑрӑшман-ши? Ҫӗршер-пиншер ҫыру килет ун патне, хӑш-

пĕр ҫынсем вара депутат патне Ҫăлтăр хулине лекме те май тупаççĕ. Унсăр пуҫне пĕтĕм ҫĕршыври чăвашсем мĕн чухлĕн килсе ҫӳреççĕ кунта: артистсем, ҫыравҫăсем, спортсменсем... Шăпах ҫавăн чухне Андриян Григорьевич хăйĕн шанчăклă тусĕ И.П.Тявин ҫине таянса ĕҫленĕ, ăна шаннă, ĕненнĕ. Илья Петрович ыйтнипе эпĕ ăна ҫывăх вăхăтра хăйсен юбилейĕсене паллă тума хатĕрленекен паллă писательсен, композиторсен, художниксен, театр ĕҫченĕсен ячĕсене пĕлтерсе тăраттăм. Ҫав ҫынсене пирĕн мухтавлă космонавтăмăр саламлă телеграмма е уяв открытки ярса парса савăнтаратчĕ.

Урăхларах йышши ыйтусем ҫĕклени те пулнă депутат патне ҫырнă ҫырусенче. Акă пĕррехинче Илья Петрович Шупашкара пĕр кĕтмен ҫĕртен килсе ҫитрĕ. Андриян Григорьевич ăна Ҫуйăн Хветĕрĕн, поэт-фольклористăн, «Улăп» эпос авторĕн, хăй патне янă ҫырăвĕнче пĕлтернине тĕплĕн тишкерсе, хурав памалли текст проектне хатĕрлесе пама ыйтнă. Илья Петрович каланă тăрăх, пĕр чăваш ҫыравҫи асăннă эпос авторĕ Ҫуйăн Хветĕрĕ пĕччен мар, унпа пĕрле эпĕ те автор пулса тăратăп тесе ĕнентерме пăхнă. Пĕр эрне ытла пурăнчĕ Шупашкарта И.П.Тявин. Наука ĕҫченĕсемпе, издательство ҫыннисемпе калаҫса, Ҫуйăн Хветĕрĕн архивĕнчи ал ҫырăвĕсене тĕплĕн тишкерсе тухнă хыҫҫăн Илья Петрович А.Г.Николаев депутата ҫак ыйтăва тĕрĕс татса пама, хăйĕн шухăшне кирлĕ ҫĕре ҫитерсе пама пулăшнă. «Улăп» эпосăн тулли версийĕ Чăваш кĕнеке издательствинче 1996 ҫулта пичетленсе тухрĕ. Унăн авторĕ Ҫуйăн Хветĕрĕ тесе палăртнă унта. Ҫапла вара истори чăнлăхне тĕрĕс ҫирĕплетес ĕҫре А.Г.Николаевпа И.П.Тявин пулăшни калама ҫук витĕмлĕ пулчĕ.

...Тата тепĕр историллĕ тĕл пулăва та эпĕ хамăн асăмра чи ҫутă та чаплă уяв вырăнне хурса упратăп. 1988 ҫулхи чӳк уйăхĕн вĕҫĕнче РСФСР Писательсен союзĕн правлени председателĕпе С.В.Михалковпа Мускавра Чăваш литературин кунĕсене ирттерме калаҫса татăлтăмăр. Кĕтнĕ вăхăт ҫывхарса пынă май эпĕ, чăваш ҫыравҫисен йышне ертсе пыраканскер, хамăр ăҫта-ăҫта пулса мĕн-мĕн тăвассине тĕплĕн палăртса килес-ха тесе тĕп хулана пырса ҫитрĕм. «Кунта пире ҫирĕм ҫынна чĕнме палăртаççĕ-ха, кунĕ-кунĕпе литература ыйтăвĕсем ҫинчен кăна калаҫса йăлăхтармĕ-и пире?» – терĕм эпĕ Мускаври тĕп Союзра ĕҫ тăвакан ҫынсене. «Эсир мĕн сĕнетĕр?» – ыйтрĕҫ манран тӳрех. «Пĕр шухăш пур-ха манăн, анчах ăна пурнăҫлама май килĕ-и? – тетĕп кăшт иккĕленерех. – Хăвăрах пĕлетĕр, Ҫăлтăр хулинче пирĕн тĕнчипе паллă ентеш Андриян Николаев космонавт ĕҫлесе пурăнать. Вăт ҫавăнта илсе кайса кăтартма май пулмĕ-ши пирĕн ҫыравҫăсене? Паллах ĕнтĕ, тăкаклă ĕҫ-пуҫ ку».

– Лайăх шухăш, – килĕшрĕ тӳрех пирĕн куратор Григорий Родионов (Гарай Рахим поэт). – Шăпах Пĕтĕм Союзри илемлĕ литературăна пропагандăлакан бюро туса ирттермелли ĕҫ-пуҫ. Халех калаҫса татăлатпăр вĕсемпе.

Тепĕр ҫур сехетрен эпĕ асăннă бюрон Раççей Федерацийĕнчи писательсемпе ĕҫлекен директор ҫумĕ Тамара Петровна Толчанова патне пырса ҫитрĕм. Вăл вара тӳрех Ҫăлтăр хулине шăнкăравласа ҫав-ҫав кун чăваш писателĕсем экскурсие пырасси ҫинчен пĕлтерсе хучĕ. Эпĕ те Илья Петровичпа телефонпа ҫыхăнтăм, вăл мана ҫак ҫул ҫӳрев программине тĕплĕнрех палăртма ыран ирхине хăй патне туха пыма йыхравларĕ.

Эпĕ Ҫăлтăр хулине пырса ҫитиччен И.П.Тявин Андриян Григорьевича эпĕ килессине пĕлтерсе хунă иккен, космонавт пире Ҫăлтăр хулин музейĕнче вун пĕр сехетре кĕтсе илме пулнă. Палăртнă вăхăт тĕлне эпир Илья Петровичпа унта кайрăмăр. Акă вăл,

Андриян Григорьевич, музейĕн тĕп пӳлĕмĕ умĕнче тăрать. Пире курсан тӳрех ман пата утса пычĕ, алла хытă чăмăртаса ыталаса илчĕ, унтан Илья Петрович енне пăхрĕ те:

– Ара, эп ăна тахçанах пĕлетĕп вĕт-ха, Чăваш çĕршывне кайсан манран пĕр утăм юлмасăр çӳретчĕ çак журналист, – терĕ. – Унтан тата, Илюша, эс ыйтнипе мар-и-ха эпĕ ăна пĕррехинче комсомол конференцийĕнчех çуралнă кун ячĕпе саламларăм. Куратăн-и, тахçанхи пĕлĕш вăл манăн.

Манса кайман иккен мухтавлă ентеш çитмĕлмĕш çулсен пуçламăшĕнче Шупашкарта е тĕрлĕ ялпа хулара халăхпа тĕл пулса калаçнă чух хăйпе пĕрле çӳренĕ корреспондентсене. Çапла, эпĕ ун чух «Коммунизм ялавĕ» (халĕ «Хыпар») хаçатра информаци пайĕн пуçлăхĕнче ĕçлеттĕм те космонавт çул çӳревĕсене час-часах хаçатра çутатма тӳр килетчĕ мана. Облаçри комсомол конференцине те лайăх астăвать иккен вăл. 1982 çулта, шăпах эп çуралнăранпа хĕрĕх çул çитнĕ кун, уçăлнăччĕ çамрăксен форумĕ. Эпĕ ун чух «Хатĕр пул» журналăн тĕп редакторĕнче ĕçлеттĕм, çавна пула мана ВЛКСМ Чăваш обкомĕн членне те пĕрре кăна мар суйланăччĕ. Шăпах çавăн чух ĕнтĕ Андриян Григорьевич мана хăйĕн «Вĕçĕ-хĕррисĕр уçлăхра» ятлă чăвашла кĕнекине менелник ячĕпе саламласа, çирĕп сывлăхпа пысăк çитĕнӳсем тума ырă сунса парнеленĕччĕ.

– Çапла, Андриян Григорьевич, унсăр пуçне 1982 çулхи çурла уйăхĕнче, хăвăр тĕнче уçлăхне пĕрремĕш хут вĕçнĕренпе 20 çул çитнĕ чухне, эсир тăван республика ачисен ыйтăвĕсене хуравланă интервью та пичетленнĕччĕ «Хатĕр пулта». Тавтапуç сире ачасем ыйтнине тĕплĕн пурнăçланăшăн, – терĕм эпĕ.

– Ачасем ыйтнине пурнăçламасан юрамасть, вĕсем пурне те чăнласа йышăнаççĕ. Вăл журнал номерне эсир ман пата темиçе те ярса панăччĕ. Астăватăп, ман çинчен çырнă сирĕн поэмăр та пурччĕ унта. Темшĕн манăн ялти кӳрше Карачăм ят панăччĕ эсир... – йăл кулнă пек турĕ космонавт.

– Документлă хайлав мар-çке, илемлĕ литература жанрĕпе çырнă ăна. Унта çыннăн ятне мар, çав çын произведени геройĕн пахалăхĕсене уçса пама пулăштăр тенине тĕпе хутăм эпĕ, – ăнлантарма пикентĕм эпĕ космос паттăрне.

– Юрать, поэму мана килĕшрĕ, çĕнĕ ĕçӳсем те ăнсах пыччăр, – хавхалантарчĕ мана Андриян Григорьевич. – Ну, хăçан тата миçен кунта килетĕр-ха эсир?

Эпĕ ăна Раççей писателĕсен союзĕн аппаратĕнче хатĕрленĕ программăпа паллаштартăм, ятлă-сумлă çыравçăсен, артистсен, журналистсен ячĕсене асăнса тухрăм.

– Юрать, сумлă делегаци, пурте йĕркеллĕ пулать, эпир кунта Илюшăпа сире тивĕçлипе кĕтсе илме тăрăшăпăр, – терĕ Андриян Григорьевич юлашкинчен.

Тепĕр темиçе кунтан эпир, чăваш писателĕсем, Мускава хамăрăн тăван литература кунĕсене ирттерме пырса çитрĕмĕр. Чăннипех те хĕрӳллĕ кунсем пулса тăчĕç вĕсем. Эпир Раççей писателĕсен союзĕнче чăваш литературин тата «Ялавпа» «Тăван Атăл» журналсен кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ, вĕсен çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсем çинчен калаçрăмăр. Пирĕн пултарулăха тĕпчесе тишкернĕ РСФСР Писателĕсен правлени секретарĕсем Ф.Чуев, Н.Доризо, А.Алексин, М.Шевченко, паллă поэтсемпе куçаруçăсем П.Градов, В.Кочетков, В.Широков, пăлхар поэчĕсем К.Химирскипе И.Соколов чăваш литературин аталанăвĕ пирки нумай-нумай ырă сăмах каларĕç, ĕçе малашне лайăхлатмалли сĕнӳсем пачĕç. Эпир тĕрлĕ предприятире, библиотекăсенче пулса вулакансемпе курса калаçрăмăр, Пĕтĕм Союзри радио студийĕнче ятарлă передача ирттертĕмĕр.

Уйрăмах чăваш писателĕсене Çăлтăр хулинче хамăрăн чаплă ентеш икĕ хут Совет

Илья Тявинпа Порфирий Афанасьев поэт.

Союзĕн Геройĕ А.Г.Николаев летчик-космонавт кĕтсе илни савăнтарчĕ. Вăл пире космонавтсем чăннипех вĕçеве мĕнле хатĕрленнине ятарлă павильонсене – шыв бассейнне тата «Мир» станци макечĕ çинчи хăнăху площадкине илсе кĕртсе кăтартрĕ. Илья Петрович каланă тăрăх, çак вырăнсене курма килекен ахаль çынсене кĕртме ирĕк памаççĕ иккен. Ун хыççăн эпир Космонавтика музейĕнчи экспонатсемпе тĕплĕн паллашрăмăр, Çăлтăр хулин илĕртӳллĕ кĕтесĕсене çитсе куртăмăр.

Çавăн пек çынччĕ вĕсем иккĕшĕ те – Андриян Григорьевич та, Илья Петрович та: хăйсен тăван çĕршывĕшĕн, çывăх ентешĕсемшĕн, атте-аннесен йăли-йĕркишĕн, чĕлхишĕн, сăвви-юрришĕн чунĕсене пама хатĕрччĕ, хăйсем те юрра-ташша ăстаччĕ, тăван литературăпа искусствăна пысăка хурса хаклама, вĕсен ăстисене тивĕçлипе хисеплеме пĕлетчĕç.

Паян вĕсем иккĕшĕ те пирĕн хушăра çук ĕнтĕ – А.Г.Николаев 2004 çулта, И.П.Тявин 2007 çулта çут тĕнчерен уйрăлчĕç.

Тĕрĕссипе, Илья Петровичăн йывăр чирĕ пирки те, вăл çав чире чăтаймасăр вилсе кайни çинчен те эпĕ питĕ кая юлса пĕлтĕм. Пĕррехинче ман хваттере Çăлтăр хулинчен Виталина Ивановна шăнкăравларĕ те çак хурлăхлă хыпара пĕлтерчĕ.

– Мĕншĕн тӳрех систермерĕр вара? Илья Петрович хăй те пĕр-икĕ çул шăп-шăпăрт пурăнчĕ. Эпĕ те сирĕн пата темиçе хут та шăнкăравланă, анчах сирĕнпе çыхăнма пултараймарăм, – пĕлтертĕм эпĕ Илья Петрович мăшăрне хам пăшăрханăва.

– Илья Петрович юлашки икĕ çул вырăнпах выртрĕ, – терĕ Виталина Ивановна. – Унччен вăл пăрлак тротуар çинче, хамăр çурт умĕнчех, пуçĕ çине ӳксе аманчĕ, кайран тăнне çухатакан пулчĕ, юн пусăмĕ ӳсниле пĕрмай аптрарĕ. Çавăнпа вăл сирĕн пата шăнкăравлама та пултарайман. Эсир пирĕнпе çыхăнайманни вăл пирĕн телефон номерĕ улшăннинчен килет. Кайран, вăл вилсе кайсан, сирĕн визит карточкине тупаймарăмăр. Акă халь тупрăмăр ăна кĕнекесем хушшинче... Килсе кайăр-ха пĕрре, вăл сире калама хушса хăварнисене каласа юласчĕ хам виличчен...

Каласа юлаймарĕ Виталина Ивановна – Шавлин çывăх тăванĕ, 2011 çулхи çуркунне вăл пиртен уйрăлса кайрĕ. Çакăн пирки мана С.Шавли хĕрĕ Ольга Степановна Кругликова пĕлтерчĕ.

Порфирий АФАНАСЬЕВ,
Чăваш халăх поэчĕ